Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчене тухать

3 (7537) № ✻ Юн кун, 2008 çулхи январĕн (кăрлач) 16-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

*Чăваш Республикин Президенчĕн УКАЗĔ*

## Чăваш Республикинче бюджет сферинче ĕçлекенсен ĕç укçине срок çитиччен ӳстересси çинчен

Бюджет сферинче ĕçлекенсен социаллă хӳтлĕхне вăйлатас тĕллевпе çапла **йышăнатăп:**

1. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн:

бюджет сферинче ĕçлекенсен ĕç укçине ӳстерме палăртса хунă сроксене маларах куçармалла тата ĕç укçине 2008 çулта ӳстерессине çакăн пек тивĕçтермелле:

Чăваш Республикин патшалăх учрежденийĕсенче ĕçлекенсен ĕç укçине 2008 çулхи нарăс уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 14 процент чухлĕ;

Чăваш Республикин республика бюджечĕн укçи-тенки шучĕпе тытса тăракан обществăлла хăрушсăрлăх милицийĕн подразделенийĕсен сотрудникĕсене тӳлекен укçа-тенкĕ шайне 2008 çулхи нарăс уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 9 процент чухлĕ, 2008 çулхи юпа уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 9 процент чухлĕ;

Чăваш Республикин патшалăх учрежденийĕсенче ĕçлекенсен ĕç укçине срок çитиччен ӳстернипе çыхăннă хушма тăкаксене укçа-тенкĕпе тивĕçтерессине шута илекен «Чăваш Республикин «Чăваш Республикин 2008 çулхи тата планпа пăхнă 2009 тата 2010 çулсенчи тапхăрти республика бюджечĕ çинчен» саккунне улшăнусем кĕртесси çинчен» саккун проектне палăртнă йĕркепе Чăваш Республикин Патшалăх Канашне пăхса тухма тăратмалла;

муниципалитет пĕрлĕхĕсен бюджечĕсене муниципалитет пĕрлĕхĕсен бюджет сферинче ĕçлекенсен ĕç укçине ӳстерме хушма укçа-тенкĕ пулăшăвĕ памалла.

2. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене муниципалитет пĕрлĕхĕсен бюджет сферинче ĕçлекенсен ĕç укçине срок çитиччен ӳстересси çинчен йышăнусем тума сĕнес.

3. Çак Указ ăна алă пуснă кунран вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Президенчĕ**
**Н. ФЕДОРОВ.**

Шупашкар, 2008, кăрлач, 14, 3 №.

**(Указа ăнлантарса пани 2-мĕш стр.).**

**Пире хаклани**

***Раççей Федерацийĕн Федераллă Пухăвĕн Федераци Канашĕн Председателĕ С.М. Миронов:***

## «Çитĕнӳсем куç кĕрет»

Чăваш Республики хăй инноваци полигонĕ пулнине кăтартса пачĕ. Унта экономикăпа социаллă аталану процесĕн çĕнĕ формисемпе мелĕсем активлă пурнăçа кĕрсе пыраççĕ. Пурнăç аталанăвĕн пур сферинче те республикăн палăрамлă çитĕнĕвĕсем куç кĕрет. Вĕсене Раççей Федерацийĕн Президенчĕ те пысăк хак пачĕ.

**Ĕçре пултаруллисем**

## Культура вучахĕсем ялкăшсах тăччăр



***Сăн ӳкерчĕкре эсир «Муркаш районĕнчи ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотека» муниципаллă культура учрежденийĕн ертӳçине Елена Геннадьевна Черновапа литературăна комплектлас тата йĕркелес енĕпе ĕçлекен пайĕн заведующине Тамара Валериановна Павлована куратăр.***

***Çӳлерех асăннă культура вучахĕ хăйĕн сăн-сăпатне самай улăштарчĕ, унăн ĕçĕ-хĕлĕ самай пуянланчĕ. Çакă вара ăста специалистсен тăрăшулăхĕнчен те килет ĕнтĕ. Тĕрлĕ информаци илме килнĕ вулавçă тивĕçлĕ шайри пулăшăва илме яланах пултарать. Юлашки вăхăтра библиотекăна çӳрекенсен йышĕ палăрмаллах ӳсрĕ. Кунта виçĕ зал ĕçлени те вулавçăсемшĕн питĕ меллĕ. Кăмăл тăвакансем утмăла яхăн тĕрлĕ хаçат-журналпа интересленме пултараççĕ. Ăста специалистсем яланах çĕнĕлĕх шыравĕнче хăйсен ăсталăхне туптаççĕ. Кунта тăтăшах тĕрлĕ шайри клубсене йĕркелесе ĕçлеттереççĕ. Хăйсен ĕçне чунĕсене парса пурнăçлаççĕ библиотека ĕçченĕсем. Вулавçăсем вара вĕсен ĕç-хĕлĕпе питĕ кăмăллă.***

***Р. ИЛЛАРИОНОВА сăн ӳкерчĕкĕ.***

**Пĕрлехи информаци кунĕ**

## РФ Президенчĕн суйлавĕн ыйтăвĕсемпе

Йăлана кĕнĕ тăрăх, районта паян пĕрлехи информаци кунĕ иртет. Унăн темисем – «Раççей Федерацийĕн Президенчĕн 2008 çулхи мартăн 2-мĕшĕнчи суйлавĕ: суйлав законодательстви, хатĕрленӳ тата суйлавçăсен активлăхĕн ыйтăвĕсем», «Çул çинче çӳрессин хăрушсăрлăхĕн тата çул çинчи чрезвычайлă лару-тăрăва асăрхаттарассин ыйтăвĕсем», «Чăваш Республикинче 2007 çулта пысăк пĕлтерĕшлĕ наци проекчĕсене пурнăçа кĕртсе пынин итогĕсем çинчен».

ЧР Патшалăх ветеринари службин ертӳçи В.К. Тихонов ертсе пыракан ушкăн Чуманкасси ял тăрăхĕнче, Чкалов тата Чапаев яч. хис. пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче, Чуманкасси шкулĕнче, РФ Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн управляющийĕ Р.А. Кондратьева ертсе пыракан ушкăн Ильинка ял тăрăхĕнче тата Ильинка шкулĕпе Тренккăри врач амбулаторийĕнче, РФ Юстици министерствин Чăваш Республикинчи суд экспертизин лабораторийĕн пуçлăхĕ Л.П. Морозов ертсе пыракан ушкăн Юнкă ял тăрăхĕнче, Юнкă шкулĕнче тата Юнкăри пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕнче пулса кураççĕ, ял çыннисемпе, ĕç коллективĕсемпе тĕл пулаççĕ, ял çыннисен ыйтăвĕсем çине хуравлаççĕ.

**Республика кунне хатĕрленсе**

## Йĕркене хамăрăнах тумалла

***Хăна-вĕрлене кĕтсе чăвашсем ĕлĕкех пӳрт-çурта тирпейленĕ. Республика кунне хатĕрленсе иртермелли мероприятисен ĕç планĕнче те урамсемпе çуртсене, ялсене хăт кĕртесси малта тăрать. Чăвашсен аслă уявне хатĕрленес ĕç районта мĕнле пырать? Çак ыйту çине хуравлама ыйтрăм та ĕнтĕ эпĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕнчен, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн ертӳçинчен В.Г. НИКИТИНРАН:***

– Тунти кун ку ыйтупа район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов район администрацийĕн яваплă ĕçченĕсемпе канашлу ирттернĕ. Унта калаçу, тĕпрен илсен, ялсемпе урамсене, нумай хваттерлĕ çуртсене хăт кĕртесси пирки пулчĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕн ятарлă виçĕ йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн район администрацийĕн пай пуçлăхĕсем хăйсене çирĕплетнĕ ял тăрăхĕсенче, Муркашри урамсемпе нумай хваттерлĕ çуртсене хăт кĕртес енĕпе яваплă пулса тăраççĕ. Çавăн пекех район администрацийĕнче, патшалăх учрежденийĕсенче ĕçлекенсене те хăйсем пурăнакан нумай хваттерлĕ çуртсемпе вĕсен таврашĕнче хăт кĕртессишĕн яваплă пулма çирĕплетнĕ. Ăнлантару ĕçĕ те пуçланнă. Муркашри Парковăй тата Октябре 50 çул урамсенчи çуртсенче пурăнакансемпе январĕн 8-мĕшĕнче пухусем ирттернĕ. Унта район центрне хăт кĕртес ыйтусем пирки калаçнă. Кивĕ сарайсене сӳтме калаçса татăлнă, сарайсене тума урăх ятарлă вырăн уйăрни çинчен ăнлантарнă.

– Республика кунне хатĕрленсе иртермелли нумай-нумай ĕçсен шутĕнче республика çулĕсене юсассине те кĕртнĕ. Автанкасси – Муркаш – Козьмодемьянск çул çинче ку ĕçе çак таранччен 4,5 км çинче туса ирттернĕ. Çапла вара тепĕр 12,8 километрне кăçал юсамалла.

Çавăн пекех "Волга – Мăн Сĕнтĕр – Шашкар пристанĕ" (10,8 км), Муркаш – Турай – "Сура" (4,5 км) çулсем çинче те юсав ĕçĕсене кăçал туса ирттермелле. Умри задачăсене пурнăçлас тĕлĕшпе подрядчиксемпе ĕçлетпĕр.

**Л. ПАВЛОВА калаçнă.**

**«Вĕрентӳ» наци проекчĕ**

## Ыйтусем çине Л.И. Мочалов хуравлать

Ку хутĕнче район хаçатне вулакансен, район çыннисен ыйтăвĕсем çине район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕ Леонид Иванович МОЧАЛОВ хуравлама кăмăл турĕ. Хисеплĕ вулакансем, сирĕнтен çырусем кĕтетпĕр. Çырусене район хаçачĕн редакцине тата район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайне ярса пама та юрать, кунпа пĕрлех редакцие 2–12–82 телефонпа шăнкăравлама та пултаратăр. Ыйтусем вара тĕрлĕрен пулма пултараççĕ: вырăнсенче «Вĕрентӳ» наци проекчĕ мĕнле пурнăçа кĕрсе пынинчен пуçласа конкретлă тĕслĕхсем таранах. Апла пулсан хăвăра интереслентерекен ыйту çине хурав илме май пуррипе усă курма васкăр. Кунпа пĕрлех вĕрентӳ ĕçне çĕнетсе улăштарассипе, çĕнĕ шая çĕклессипе хăвăрăн шухăш-кăмăлăра, сĕнӳсене те пĕлтерме пултаратăр.

**РАЙОНТА: ĕнер, паян, ыран**

## ЧР Министрсен Кабинетĕнчен

Районăн ӳсĕмĕ кашни ĕç коллективĕ тăрăшуллă ĕçленинчен, хăйĕн отраслĕнче ответлăха туйса çанă тавăрса вăй хунинчен килнине кашниех ăнланатпăр.

Иртнĕ çулхи ĕçсене пĕтĕмлетессипе районти пушар хуралĕ çулталăкăн малтанхи кунĕсенчех пысăк ĕçсем туса ирттерчĕ. Çак ĕçсем республика шайĕнче те малти вырăнта пулчĕç. Палăртма кăмăллă, ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ – республикăри гражданла оборона пуçлăхĕ С. Гапликов çак тытăмри ĕçсене тишкерсе гражданла оборона системине тата республикăри чрезвычайлă лару-тăру системин территорири пайĕпе унăн звенисене паянхи кун шайĕнче тытса пырас ĕçри ӳсĕмсемшĕн, чрезвычайлă лару-тăрăва сирессипе пуçарулăх кăтартнăшăн Раççейри Чрезвычайлă лару-тăру министерствин Чăваш Республикинчи Тĕп Управленийĕн пирĕн районти патшалăх пушар надзор уйрăмне иртнĕ çул пĕтĕмлетĕвĕсемпе 2-мĕш степеньлĕ дипломпа наградăланă.

## Кĕрхи призыв пĕтĕмлетĕвĕ

Муркаш тата Элĕк районĕсен çар комиссариачĕ 2007 çулхи кĕрхи призывра 1980-1989 çулсенче çуралнă граждансене "Çар службин обязанноçĕ тата çар служби çинчен" федераллă саккунпа килĕшӳллĕн действительнăй çар службине илессине палăртнă вăхăтра ирттернĕ. Йĕркене пăхăнса çул çитнĕ тата сывлăх тĕлĕшĕнчен юрăхлă 100 яша çара ăсатнă. Вăл шутран Муркаш Енрен – 60 çамрăк. Çак тапхăрта çар службинчен пăрăнас текен 4 çамрăка административлă майпа айăпланă, иккĕшĕн пирки материалсене Муркаш тата Элĕк район прокуратурисене ярса панă.

Кĕрхи призыв вăхăтĕнче Катькас, Хорнуй, Юнкă, Турай, Шетмĕпуç, Уйкас Янасал ял тăрăхĕсем ыттисенчен лайăхрах ĕçленĕ. Çав вăхăтрах Мăн Сĕнтĕр, Ярапайкасси ял тăрăхĕсенче çар тивĕçне пурнăçлассинчен пăрăнакансем пĕр-икĕ çын çеç мар. Кунта ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем ĕçлесе çитерейменни курăнать.

## Ял хуçалăхĕ кĕтет

Çĕршыв Президенчĕпе Раççей Правительстви юлашки çулсенче ял хуçалăх аталанăвĕ çине тимлĕх уйăрни çын каламасăрах курăнать, анчах татса паман ыйтусем те çук мар. Тĕп ыйту – ĕçлекенсем çитменни. Районти агропромышленноç комплексĕнче, хресчен (фермер) хуçалăхĕсене шутламасăр, паянхи куна пĕтĕмпе 2460 çын ĕçлет. Çулталăк каялла ку хисеп 3341 çын пулнăччĕ. Çухатусен пĕр пайĕ ялсенче йĕркеленекен хресчен (фермер) хуçалăхĕсемпе çыхăннă пулсан та, пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче кадр ыйтăвĕ çивĕч тăни куç кĕрет. Уйрăм калаçу – специалистсем çителĕксĕрри. Паянхи куна районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче руководительсемпе специалистсен ĕç вырăнĕн вакансийĕ 56 вырăн. Вăл шутран 5 хуçалăхра тĕп зоотехникпа инженер, 4 çĕрте тĕп агроном, 3 хуçалăхра тĕп бухгалтер, 9 çĕрте вăтам сыпăкри ветспециалистсем, инженерсемпе техник-строительсем 3 çын, ĕç хăрушсăрлăхĕн инженерĕсем 4 çын. Çак лару-тăру производствăра ĕçлекен рядовой ĕçченсем тĕлĕшпе те палăрать. Паян хуçалăхсенче уйрăмах водительсем (32 ваканси), выльăх-чĕрлĕх пăхакансем (24), машинăпа ĕне сăвакан операторсем (12), уй-хирте вăй хуракансем (24), электрогазосварщиксем (9), тракторист-машинистсем (32), ял хуçалăх машинисене юсакансем (5) çитмеççĕ. Каламалла, ял хуçалăхĕ паян тарăн пĕлӳ илнĕ специалистсене кĕтет. Ял хуçалăхне малашлăха пăхса ĕçлеме килекенсем вара çук мар. Иртнĕ çул кăна тĕрлĕ вĕренӳ заведенийĕсем хыççăн районти ял хуçалăхĕнче 44 çамрăк специалист ĕçлеме кăмăл тунă. Вĕсенчен пĕр пайĕ патшалăх пулăшăвĕпе усă курма та ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ. Апла ыттисем валли те çул уçă.

## Пĕлĕве ӳстерме май пур

Республикăра ял хуçалăхĕнче ĕçлекенсен професси квалификацине ӳстерессипе кадрсене çĕнĕлле ĕçлеме хатĕрлессине яланах малти вырăна хураççĕ. Акă нумаях пулмасть района ертӳçĕсене, тĕп специалистсене, бухгалтерсемпе экономистсене тата техник-осеменаторсене професси тĕлĕшĕнчен çĕнĕ пĕлӳ парассипе, тĕп инженерсенне, хресчен (фермер) хуçалăха ертсе пыракансенне, агрономсемпе зоотехниксенне, тĕп агрономсенне, ферма заведующийĕсемпе утарçăсенне квалификацине ӳстерме чĕнсе ыйтса план-график килчĕ. Хĕл кунĕсенче çĕнĕлĕхсене алла илес текенсене район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕнче кĕтеççĕ. Çавăнпа пĕрлех январĕн 15-мĕшĕнчен тытăнса февралĕн 15-мĕшĕччен утарçăсем те ятарлă программăпа хăйсен пĕлĕвне ӳстерме пултараççĕ.

Чăваш ял хуçалăх академийĕн квалификаци ӳстерессипе тата кадрсем çĕнетсе хатĕрлессипе ĕçлекен факультечĕ "Менеджмент" тата "Бухгалтери учечĕпе аудит" программăсемпе пĕлӳ илме ял хуçалăх предприятийĕсен ертӳçисене, тĕп тата вăтам сыпăкри специалистсене тӳлевсĕр вĕренме йыхравлать. Мĕнех, хĕл кунĕсемпе тухăçлă усă курса юлсан, çурхи-кĕрхи ĕçсем те çĕнĕлле те тухăçлăрах пуласси пирки иккĕленӳ пулмасть.

## Çур аки пирки шутламалла

Кун таврăнчĕ те, маларах пулсан та, çур аки пирки шутлама вăхăт. Малтанах ĕç вăйĕ пирки. Çур акине агротехникăпа килĕшӳллĕ вăхăтра ирттерме хуçалăхсене пурĕ 272 механизатор кирлĕ пулсан, паянхи куна вĕсем 229 çын кăна. Унччен шкулсемпе училищĕсенчен механизатор удостоверенийĕ алла илсе хуçалăхсене килекенсене шутласан та (17 çамрăк) механизаторсен йышĕ çителĕксĕртерех. Паян пуррисем хушшинче 155-шĕ 1-2 класлă механизаторсем. Пĕтĕм йышран 34-шĕ 30 çула çитмен çамрăксем, 176-шĕ – 31-55 çулхисем. Вĕсенчен аслăраххисем – 11 механизатор. Çак лару-тăру хуçалăх ертӳçисемпе инженерĕсене паянах шухăшлаттарма тивĕç.

**А. БЕЛОВ хатĕрленĕ.**